Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

104 (7744) № ✻ Шăмат кун, 2009 çулхи декабрĕн (раштав) 26-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Ĕç коллективĕсенче

## Ыттисемшĕн тĕслĕх вырăнне

***Çапла хаклама пулать Шурчари пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул директорне Светлана Вениаминовна Троицкаяна. Шкулта ĕçлекен кашни учительшĕн, пĕлӳ пухма кунсерен пыракан кашни вĕренекеншĕн унăн тăрăшулăхĕ. Пĕтĕм тĕнчери экономика кризисĕ-и е вĕрентӳ ĕçĕнчи самантлăх йывăрлăхсем – пурте унăн чĕри витĕр тухаççĕ. Çакна кура – шкул ӳсĕмĕсем, çĕнĕлĕх вăйилни, ачасен шанчăклă аталану утăмĕсем.***

***С. Троиицкая Шурча шкулне ĕçе вырнаçнăранпа чĕрĕк ĕмĕр хыçа юлчĕ те ĕнтĕ. Ачасене математикăпа физика предмечĕсене вĕрентме пуçласанах çак çула суйласа илнĕ çамрăк хĕрарăм малтанхи çулсенче вожатăй ĕçĕсене те туса пынă. Çавăнпа та шкул пурнăçĕнчи кашни пулăм уншăн хăйне евĕр çывăх. Çакнашкал аталаннипех ĕнтĕ шкул 2008–2009 вĕренӳ çулĕнче тĕп шкулсем хушшинче малти вырăна тухма пултарчĕ. Кунта пысăклатса кăтартнă пĕр кăтарту та çук.***



***Мăшăрĕпе – Николай Петровичпа – виçĕ ача çуратса ӳстернĕ хĕрарăм шкулти кашни ачана хăйĕн пепки вырăнне хурса йышăнать. Юратура – пулас ӳсĕмсен никĕсĕ.***

**А. БЕЛОВ.**

Марафон

## Ырă туни ырăпах таврăнать

Ачасен ыр кăмăллăх марафонне хутшăнса ятарлă счет çине укçа куçаракансен йышĕ, пухăннă укçа-тенкĕ сумми хушăнсах пыраççĕ. Ĕнерхи куна предприятисемпе организацисем пĕтĕмпе 51398 тенкĕ куçарса панă. Çак кунсенче укçа куçарнисем хушшинче «Пучах» общество (3000 тенкĕ), «ВАСЕМ» общество (2000 тенкĕ), районти тĕп больница (16930 тенкĕ), «Россельхозбанк» (1250 тенкĕ), районти çамрăк техниксен станцийĕ (2000 тенкĕ), «РГС–Поволжье» общество (3000 тенкĕ), Чăваш Республикин Финанс министерствин Муркаш районĕнчи пайĕ (500 тенкĕ).

Ача-пăча хатĕрĕсене (тумтир, атăпушмак) парса пулăшакансем те çук мар. Çак кунсенче Муркашра пурăнакансем А.А. Данилова, В.А. Никитина ку енĕпе пулăшу кӳме кăмăл тунă.

**Хамăр инф.**

Черетсĕр лару

## Кулленхи ыйтусене тишкерчĕç

Депутатсен районти Пухăвĕн черетсĕр 38-мĕш ларăвĕ район администрацийĕн ларусен залĕнче 2009 çулхи декабрĕн 23-мĕшĕнче пухăнчĕ. Ларура пăхса тухма кун йĕркине çак ыйтусене кĕртрĕç: «Муркаш районĕн Уставне улшăнусемпе хушăмсем кĕртесси çинчен»; «Муркаш районĕнче преступноçпа кĕрешессине вăйлатмалли 2010–2012 çулсенчи комплекслă программа çинчен»; «Районăн муниципаллă харпăрлăхĕнчи пурлăхне ял тăрăхĕсен харпăрлăхне парасси çинчен»; «Муркаш ял тăрăхĕн администрацийĕн хăш-пĕр полномочийĕсен пайĕсене йышăнасси çинчен»; «Депутатсен районти Пухăвĕн 2006 çулхи февралĕн 28-мĕшĕнчи С-7/2 № «Чăваш Республикинчи Муркаш район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики, физкультурăпа спорт пайĕ çинчен калакан положение çирĕплетесси çинчен» йышăнăвне улшăнусем кĕртесси çинчен»; «Депутатсен районти Пухăвĕн 2010 çулхи ĕç планĕ çинчен».

Сӳтсе явнă ыйтусемпе депутатсем ларура тивĕçлĕ йышăнусем турĕç.

**Хамăр инф.**

Блиц-интервью

## Хăрушлăх çук мар

***Нумаях пулмасть çанталăк питĕ сивĕ тăчĕ. Термометр юпи 30 градуса çити те анчĕ. Çитменнине çак вăхăтра çĕр çинче юр пачах та пулмарĕ. Ку сивĕсене пула хирти кĕрхи тырă калчисем сиенленмерĕç-ши? Çак ыйту çине хурав пама ыйтрăм эпĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн çумне, ял хуçалăх пайĕн пуçлăхне Владислав Кириллович АНАНЬЕВА.***

– Кун пек хăрушлăх, чăнах та, пур. Енчен те ака технологине пăхăнса кĕрхи культурăсене 6–8 сантиметр тарăнăшне акса хăварнă пулсан, калчасем сиенленме кирлĕ мар. Ыраш тăпрари 19 градус сивĕне, кĕрхи тулă 14–15 градуса чăтма пултараççĕ. Енчен те вара хуçалăхсенче тырăсене ăшăхрах акнă пулсан, вĕсем сиенленме те пултарнă. «Россельхозцентр» специалисчĕсем çав тапхăрта туса ирттернĕ тĕрĕслевсем çакăн çинчен калаççĕ те.

Районти хуçалăхсенчи агрономсен те кая юлмасăр январь–февраль уйăхĕсенче акнă лаптăксенчи çĕр пробисене илсе тĕрĕслесе пăхмалла. Енчен те сиенленнĕ лаптăксем пур пулсан, вăрлăхсем хатĕрлесси пирки хальтерех шухăшлас пулать. Çур акине тухас умĕн ку кĕтмен туман япала ан пултăрччĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.**

2010 çулхи халăх çыравĕ

## Вăхăчĕ нумаях мар, ĕçлемелли пур-ха

Çитес çулхи халăх çыравне ирттерес енĕпе районта ятарлă комисси йĕркеленĕ. Унăн ларăвĕсене кашни кварталтах ирттеретпĕр. Ларусенче умри задачăсене пĕрле пухăнса канашласа татса паратпăр.

2009 çулхи июлĕн 17-мĕшĕнче иртнĕ ларурах палăртнăччĕ ĕнтĕ, июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 24 регистратор ĕçе тытăннă. Вĕсем ялсенчи çынсен уйрăм çурчĕсене шута илнĕ. Ку информаци кашни çуртра, ялта, пĕтĕмĕшле районта пурăнакан çынсен шучĕ пирки даннăйсен базине йĕркелеме кирлĕ.

Çапла вара малтанласа хатĕрленĕ списока 177 яла пурне те кĕртнĕ. Вĕсенче 14288 уйрăм çурт, пурăнмалли тата пурăнмалли мар строенисем 14313, пурăнмалли хваттерсемпе пӳлĕмсем 15075, çынсем пĕтĕмпе 37165 шутланнă. Регистраторсем уйрăм çынсен хуçалăхĕсенче пулнă хыççăн участоксем тăрăх даннăйсене çĕнетрĕмĕр. Çапла вара çак вăхăта районĕпе пĕтĕмпе 190 квартал, 14320 уйрăм çурт, пурăнмалли тата пурăнмалли мар строенисем 14336, пурăнмалли хваттерсемпе пӳлĕмсем 15309, ялан пурăнакансем 36244 çын.

Чăвашстатăн 2009 çулхи октябрĕн 6-мĕшĕнчи 92-мĕш номерлĕ хушăвĕпе килĕшӳллĕн республика тăрăх контрольнăй числосене палăртнă. Пирĕн районта шутлав участокĕсене 91 туса хунă (1 переписчик пуçне 400 çын виçепе). Инструктор участокĕсем 23, çырав участокĕсем 6, стационарлă участоксем 12. Вăтам шутпа 1 çырав участокне 6041 çын, 1 инструктор участокне 1576 çын, 1 шутлав участокне 398 çын тивет.

Хатĕрленӳ ĕçĕсем анлă сарăлнă. Вĕсене вăхăтра вĕçлесе çырава йĕркеллĕ ирттерме майсем çук мар.

**А. ВОЛКОВ, халăх çыравне ирттерес ыйтусемпе ĕçлекен районти уполномоченнăй.**

Райадминистрацире

## Пултаруллисене – Хисеп грамоти

***Нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2009 çулхи декабрĕн 7-мĕшĕнчи 760 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– **Таисия Валериановна БАРКОВАНА**, район администрацийĕн бухгалтери учечĕн секторĕн заведующине;

– **Татьяна Леонидовна ИДАКОВАНА**, район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн централизациленĕ бухгалтерийĕн экономистне;

– **Глафира Порфирьевна КУЗНЕЦОВАНА**, 2-мĕш номерлĕ район больницин тĕп бухгалтерĕн çумне;

– **Ольга Михайловна СТЕПАНОВАНА**, Турай шкулĕн бухгалтерне;

– **Фаина Алексеевна ФИЛИППОВАНА**, район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн тĕп специалист-экспертне;

– **Надежда Ивановна ТИХОМИРОВАНА**, район администрацийĕн финанс пайĕн тĕп специалист-экспертне.

Сывлăх

## Донорсен кунĕсем вĕçленмен

Муркаш районĕнче донор кунĕсем пыраççĕ. Тĕслĕхрен, Нискассинче те декабрĕн 16-мĕшĕнче юн парас текенсем пухăннă. 50 çын пĕтĕмĕшле 20 литр юн панă. Декабрĕн 22-мĕшĕнче юн паракансем Ярапайкассинче те чылаййăн пухăннă – 68 çын 27,2 литр юн панă. Тепĕр кунне вара донор кунĕ Шетмĕпуçĕнче иртнĕ. Унта пухăннă 58 çын 23,2 литр юн парса республикăри çынсене сыватас ĕçе хăйсен тӳпине хывнă. Юн паракансем хушшинче – «Хисеплĕ донор» ята тивĕçнисем пулни вара ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăрать.

Юн панă çынсем икшер канмалли куна тата 100-шер тенкĕ компенсаци укçине тивĕçнĕ.

Районта донор кунĕсем декабрь вĕçленичченех пыраççĕ. Донорсем çак ĕçе активлă хутшăнасса шанатпăр.

Пенси илекенсене пĕлме

## Уяв кунĕсенче пенсисене – маларах

Декабрь уйăхĕн вĕçĕнчех ĕнтĕ январь уйăхĕнче илмелли пенсисене çĕнĕ виçепе – валоризацие тата социаллă хушма тӳлевсене шута илсе шутласа парĕç.

<u>**Почта**</u> январьти пенсисене çак графикпа пама тытăнать:

– январĕн 4-мĕшĕччен (асăннă кун та кĕрет) илмеллисене – декабрĕн 29–30-мĕшĕсенче;

– январĕн 5–7-мĕшĕсенче илмеллисене – январĕн 5–6-мĕшĕсенче;

– январĕн 8-мĕшĕнчен тытăнса – яланхи графикпа.

<u>**Банксенче**</u> декабрĕн 29-мĕшĕнчен тытăнса январĕн 13-мĕшĕччĕнхи тапхăрта илмелли пенсисене параççĕ.

2009 çулта пенсисене вăхăтра тата туллин тӳлесе тăнă. Кунсăр пуçне çулталăк хушшинче ĕç пенсийĕсене 4 хутчен индексациленĕ: март, апрель, август тата декабрь уйăхĕсенче. Çапла вара Муркаш районĕ тăрăх ватлăха пула паракан ĕç пенсийĕн вăтам виçи 5375 тенкĕпе танлашрĕ.

Çитес çултан тытăнса, социаллă хушма тӳлевсем пама тытăннă май, республикăри пурăнма кирлĕ минимумран кая пенси илекен пенсионерсем пулмаççĕ. Ĕç стажĕсене кура, вăл шутра совет самани вăхăтĕнче ĕçленĕ тапхăра шута илсе пенсисене валоризациленĕ май, пенсионерсен пурнăç шайĕ самай ӳсет. Ватлăха пула паракан ĕç пенсийĕн вăтам виçи 6 пин тенкĕ ытла пулать.

**Е. АЛЕКСАНДРОВА, РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхĕ.**

ÇЫРĂНТАРУ

## Пĕрремĕш çур çул валли çырăнтараççĕ

**Хаклă вулакансем!**

**Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2010 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма çырăнтарас тапхăр вĕçленсе пырать. Çавăнпа та почтальонсемпе паян-ыранах тĕл пулма тăрăшăр.**

**Хаçата унчченхи хакпах çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнмалли хак – 191 тенкĕ те 70 пус.**

**Çитес çулта та пĕрле пулар!**